Влади вас Гарайев

# КАВКАЗ хăнисем



36-11
1943

ЧӐВАШ ЧӐПТА ПРОМЫШЛЕННӐҪ СОЙУЗӖ
(ЧУВАШКУЛЬПРОМСОЮЗ)

ВЛАДИВАС БАРАЙЁВ

# КАВКАЗ ХӐНИСЕМ

ЧӐВАШСЕН ПАТШАЛӐХ ИЗДАТӖЛСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1936

# ТУПМАЛИ


*Стр.*

Çул çинче . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
Мускавра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 12
Кавказра . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17
Упăтесен питомникĕнче . . . . . . . . . . . . . . . . . 25
Сталинградра. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
Атăл çинче . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 31

## Çул çинче

Ирхине. Хĕвел тухса сарăлсанах çичçĕр çитмĕл тĕслĕ çеçке-çулçă çинче симĕсĕн-кăвакăн, хаклă ахахмерчен пĕрчисем пек йăлтăртатса курăнакан сывлăм шăрçисем куççене ачашлаççĕ. Хĕвел тухнипе пĕрлех чечексем те хăйсен куçĕсене ытларах чарса савăнăçлăн пăхма тытăнаççĕ. Сатри вĕçен кайăксен концерчĕ уççăн та илемлĕрех йанăрама тытăнать; кӳлĕ хĕрринче карăш картлатни, вăрман хĕрринче куккук куклани, йал йенче автансем шарлатса авăтни, аслă улăха шăрçа пек сапаланса тухакан кĕтӳри выљăх сассисем, тата ытти пĕтĕм чĕрĕ-чун сасси те пĕрлешсе пĕр сасă пулса кайнипе, нотăсемсĕрех темле çимфонилĕ сумлă музăк йанăранă пек туйăнать. Ку йанăрав—итлесе тăранма çук канлĕ, хаваслă. Ку сасăсем çамрăклантараççĕ чĕрене, çĕклентереççĕ чуна, пурăнас килтереççĕ пурнăçа. Чĕре паттăрланать. Çакăн пек вăхăтра пĕтĕм çĕршыва ыталас килет вара. Çакăн пек пуçланать çĕнĕ кун.

Канаш станци чылай айакка, хыçа тăрса йулнă. Пуйăс сăрта хирĕç хулленрех, васкамасăр, чух хашлатса улăхать. Унăн йышлă кустăрмисем вĕççĕр вăрăм чукун рељсăсем тăрăх илемлĕ кĕвĕ каласа пыраççĕ. Халиччен пуйăс çине ларман çынна вăл кĕвĕ тата илемлĕрех илтĕнет.

Уçă чӳречерен вакун ăшне вĕçсе кĕнĕ сарă лĕпĕш, иккĕмĕш ĕретри полкă çинче çывăракан Праскийĕн пиçсе çитнĕ панулми пек пичĕ çине ларчĕ те, хăйĕн çепĕç урисемпе ăна кăшт кăтăклантарчĕ. Праски, ăйхи

иртме пуҫланипе, канлӗн анасларӗ. Шуйханнӑ лӗпӗш тепӗр питҫӑмарти ҫине кусса ларчӗ. Вӑл хӑйӗн сарӑ та ҫемҫе ҫуначӗсемпе вӑранакан хӗре питӗнчен ик-виҫӗ хут лӑпкаса ачашларӗ. Праски матур аллисемпе хӑвӑрт хупларӗ лӗпӗше.

— Ах, йепле есӗ кӑтӑкласа ҫӳреме вӗреннӗ... Лекрӗн-и!— терӗ вӑл ҫемҫе сассипе, сарӑ лӗпӗше пӳрни вӗҫӗсемпе тытса илсе. Вара айӑпсӑр „чуна" вакун чӳречинчен кӑларса йачӗ.—Асту, кайӑксенчен сыхланса ҫӳре!— терӗ вӑл ӑна тулала кӑларса йанӑ чух. Лӗпӗш часах куҫран ҫухалачӗ.

Пуйӑс вӗҫтерет малалах. Вакун кустӑрмисен илемлӗ кӗвви Праскийе те килӗшрӗ. Вӑл кӗвӗ ӑна колхозри каҫсенче Ваҫили хут купӑспа выљакан кӗвӗ пекех туйӑнать.

Акӑ пуйӑс вӑрман хӗрринеле тухса пырать. Ак, тинӗс пек хумханса ларакан шӑркана ларнӑ ыраш пусси. Кӑҫалхи ырашӑн хӑмӑлӗ—хӑмӑш пек, пучахӗ—чакан пек, тӗшши—пӑрҫа пек пуласси паллах; ак талкӑшӗпех йемйешӗл пустав сарса пӑрахнӑ йевӗр ҫуртри; ав лере, инҫех мар, йал. Йал тулашӗнче казармӑсем пек вӗр-ҫӗнӗ вӑрӑм ҫуртсем тӑсӑлса лараҫҫӗ. Пӗр ҫурчӗ ҫинче ҫӳлӗ мачтӑсем. Ку—колхоз клубӗ йе правлени пулас; ак, пӗр ушкӑн Праски пекех ҫитӗннӗ хӗрсем. Вӗсем ирех тӑмрасемпе хаваслӑ йурӑсем йурласа пыраҫҫӗ: чашкӑрса пыракан пуйӑса шурӑ тутӑрсемпе сӗлтесе ӑсатаҫҫӗ. Вӗсем ҫум ҫумлама кайакансем. Ак, хӗрсен пуҫӗ тӗлӗнче пӗр тӑри: „ӗҫле-ӗҫле ҫи, ӗҫле-ӗҫле ҫи!"—тесе сывлӑшра пӗтӗрӗнет; ак, телефон пралукӗсем ҫинче пӗр ушкӑн чӗкеҫ, вӗсем—халь ҫеҫ йурласа пыракан хӗрсем пек чӗвӗлтетсе йурласа лараҫҫӗ.

Пурнӑҫ! Пӗтӗм пурнӑҫ картинланса курӑнать вакун чӳречинчен.

— Ех, аванҫке, пит те аван капла, йарӑнса пыракан пуйӑс чӳречисенчен чӗрӗлекен тӗнче илемлӗ ҫине пӑхса пыма! Ех, анненеччӗ... аннене ҫакӑн пек ҫӳреттерсе кӑтартасчӗ манӑн пӗрре. Курман вӗт вӑл мӗскӗн...— терӗ те Праски тарӑн шухӑша карӗ.

— Вӑл, вӗт, ӗмӗрне те питӗ тумтир тӑхӑнса курман, шавах пуйансем патӗнче ӗҫленӗ,—куҫҫулӗсӗр ҫӑкӑр ҫи-

йеймен. Хĕлле пулсан, ирхи куна каçченех чăпта çапнă; çула пулсан—пуйансенне тырă вырса çӳренĕ; çăварнисем иртсен, ытти хĕрсем йĕтĕн пирĕ тĕртнĕ, унăн амăшĕ чăпта çапса ларнă...

Аратлă сысна пек мăнтăрланнă пуйан Селевер арăмĕн хура çĕлен сăнниле аскăн чĕлхи, ăна киревсĕр, намăслă сăмахсемпе каса-каса татнă, йăвăр ĕçе туйа айĕнче ĕçлеттернĕ. Çапла иртнĕ Праски амăшĕн хĕр ĕмĕрĕ. Арăм пулсассăн та унăн пурнăçĕ йусанман. Çаплах çитмен пурнăç пынă ун амăшĕн. Чухăн çын нуши хăйĕнчен те малта-мĕн! Праски ашшĕн пур пек пурлăхĕ те: мунча пек пĕчĕк пӳрт, пĕр ĕмĕре йахăн ларнă кив арпалăх манерлĕ кĕлечĕ, тата виçĕ хăлаçлă вăрăм пуши анчах пулнă. Унăн пур савăнăçĕ те çутă хĕвелре çеç пулнă. Хĕвел ăна шăнсассăн—ăшăтнă, йĕпенсессĕн типĕтнĕ, хурлансассăн—кăмăлне уçнă.

Праски хăй мĕнле çуралнине пĕлмест ĕнтĕ. Ашшĕ-амăшĕ ăна калама çук йуратнă. Акă ун ача чухнехи кунĕсем: вăл хăйсен пĕчĕк пӳрчĕн пахча йенчи тăпра çинче „теттесемпе“ выљаса ларать. Унăн умĕнче шăрпăк коробкисем, çĕтĕк-çатăк тутăр татăкĕсем, пылчăклă пуканесем. Урам йенне тухса выљасан, кӳршĕри пуйан Макар хĕрĕсем çӳçрен тăпаласа йе „теттисене“ вăрласа кайасран хăрать Праски. Акă ăна амăшĕ: — Праçук, çулă пăтă çиме кĕр!—тесе чĕнет кантăкран. Анчах пӳрте кĕрсен, çулă пăтă мар, хĕреснамĕш кӳрсе панă çĕве шывĕ анчах-мĕн! Сĕт-турăх сайра çинĕ вăл ача чух. Праçукшăн çĕве шывĕ те сĕткенлĕ апат пулнă. Кайарахпа, Праçукăн ашшĕ вилсе кайать.

— Ах, асапçке аттесĕр ӳсме,—тесе илет Праски. Ун ашшĕне чăпта хуçи Селеверĕн ăйăрĕ, утă пама кĕрсен, урипе кукалесе касса пăрахнă... Праски аван астăвать: унăн ашшĕ хĕл кунĕсенче йаланах Селевер патĕнче ĕçленĕ, çула пулсан—кĕтӳ кĕтнĕ.

Праски вăрăммăн сывласа илчĕ.

Иртнĕ кунсем. Иртнĕ чылай çулсем. Праски хăй ашшĕ пуçне вăхăтсăр çинĕ Селевер патĕнчех пурăннă, çавăнтах пулнă ун амăшĕ те. Вĕсем амăшĕпе иккĕшĕ Селеверĕн путексемпе пăрусем хупакан лупас айĕнчи

мунча пек пӳртӗнче пуранна. Ашшӗ вилсен, вӗсем хӗл сунӗсенче хайсен пӗчӗк пӳртне кайса та курайман. Вӗкен чухан кил-çуртне кӗрт шалса лартна, хутма вута ça пулман.

Селевер патӗнче чухансем вахачӗпе çур йала йахан ӗçленӗ. Праски те унтах „йӗп ачинчен“ „курас ачине“ титет. Амашӗпе иккӗшӗ те чапта ӗçӗнчех вӗсем. Ун амашне час-часах хуçа арамӗ мунчана илсе кайса, хайӗн хуп сарна çара çуна сарлакаш çурамне çума сӗнет. Праски амашӗ итлемесӗр тама пултарайман. Апла тумасан çакар пулман. Ылханла саманара пӗчӗк Праçукпа ун амашӗ пеккисемшӗн типӗ çакара тавар пуçса çийесси те вӗри куççулӗсӗр пулман. Вӗсен пеккисем сахал мар пулна ун чухне.

Ытла та хӗн пулна çав ӗлӗк кулак патӗнче чапта çапса пуранакансен пурнаçӗ... Кашни кунах ирхи шурампуçле тытанса çуркаç вахатчен мунчала тусанне çатса ларсан та, темӗн пек чун татса ӗçлесен те, выçала-тутала çеç пуранна... Хаљ ака... хаљ, ертелте ӗçленӗ чух, ирӗклӗн ӗçлетӗн, укçине лайах тӳлеççӗ. Çитменнине тата лайах та матур ӗçлекенсене тӗнче курса çӳреме йараççӗ... Екскурççи теççӗ. Таçта çитсе куратпар ӗнтӗ,—шухашласа илчӗ Праски.

Пуйас ытканнаçемӗн ытканат малала. Вакун чӳречинчен пахса пыракан таран шухашла Праски куçӗ умӗнчен паçархи пекех—асла ыраш пусси тинӗсӗ, талкашпех сип-симӗс те йем-йешӗл пустав сарна пек çуртри уйӗ, колхозла йалсемпе вӗсен чечекри сачӗсем, шур тутар сӗлтесе асатакан хавасла çампаксем вӗлтлетсе йулаççӗ. Ака, ансартран, Праски пӗр чикӗ йупи çийӗнче çерçи хурчаки путенене тапалтарса-ларнине асархарӗ.—Ах, шелçке, шел ана!.. Путене вӗт хурт-капшанка пуçтарат, а хурчаки?.. А хурчаки?..

— Кшуй, кшуй!—терӗ вал чӳрече витӗр.

— Мӗн ес, хӗрӗм, те чахасем хавалан?—терӗ пӗрле ларса пыракан Таниле Микулайӗ, чылайах çулланна вата чаптаçа.

— Çук. Çерçи хурчаки путенене тытна та...

— Усал вӗçен кайак вал хурчака тавраш. Пӗлтӗр

çапла, 7—8 чăхха, самай хĕрсе çăмарта тăваканнисенех тытса пĕтерчĕ.

— Микулай пичче, хурчăка тенĕрен, çав „Хурчăка Мĕтрик“ çинчен калакан халлапа каласа парăр-ха, ахаль ларса пыриччен... Еп çав халлапа тахçанах çырса илесшĕн те, нимпе те тӳрĕ килмест,—сăмах çумне хутшăнчĕ Лавренти, Праскипе Микулай ертелĕсенченех тепри.

— Çырсан чăнах та аван пулмала вăл. Чăн пулнă теççĕ ăна,—хушса хучĕ çӳлти полкă çинченех, унта выртса пыракан Йарки Васçилийĕ.

— Ĕнтĕ, чăнĕ-суйи паллах мар та, калаçаççĕ çав ун çинчен. Çакăн пек пулнă ун историйĕ,—терĕ Микулай пичче хăй калавне пуçласа йарса:

— Хамăр йалтан инçех мар, леш Çĕнир шывĕ йенчеле пĕр „Йуман кӳлли“ йатлă кӳлĕ пур вĕт-ха? Çав кулĕ типнĕçемĕн типсе пынă. Ĕлĕк авал çав кӳлĕ тавра етем пуç чикме çук чăтлăх хура вăрман кашласа ларнă. Вăхăтпа вăл вăрман варри темиçе мĕлйун хура çĕлен пĕр харăс шăхăрнă пек, йе аскăн арçури ушкăнĕ тискеррĕн çуйăхнă йевĕр çуйăхса ашкăннă. Вăл кӳллĕн тарăнăшне никам та пĕлмен, виçме те май пулман. Пĕрре çапла, çакăнта темиçе ĕмĕр хушши вăрман хуçи пулса лартнă вată йумана уйар аça çапат те, пушар сиксе тухат... Темиçе ерне хушши тăсăлнă урăм-сурăм пушарпа пĕтĕм вăрман сайралса йулат. Уйар çанталăк пулнă пулас. Çавăн хыççăн, вăхăт нумай-и, сахал-и иртнĕ вара, пирĕн пулас йал вырăнне пĕр ачалă арăм пырса вырнаçат. Вăл арăмăн тăван ывăлне пĕр ачасăр улпут илсе кайнă пулнă, тет. Вара вăл, улпутăн ача пăхакан хĕрарăм тарçипе пĕр каварлă пулса, лешин урлă—усрав ача арман пĕвине путнă тенĕ сăмах сарнă та, ачине илсе пирĕн çĕршыва тарса ӳкнĕ, тет. Ывăлĕ „Мĕтрик“ йатлă пулнă. Мĕтрик 17 çула çитсен, укçине ăçтан тупнине калама пултараймастăп, çичĕ пӳлĕмлĕ пысăк ампар тата пĕчĕкрех пӳрт туса лартнă. Шутласан халлап пек те, авалтан йулнă сăмаха çеç калатăп сире. Çав Мĕтрик пĕрре, пасçăр асăннă „Йуман кӳлли“ хĕрринчен 7 çулхи хĕрача тупнă, тет. Тупнă

хěр ашшě-амăш ăçтине те, вěсем мěн йатлине те пěлмен тата хăй йатне те астуман. Мěтрик ăна, килне илсе таврăнса, „Кěлпустан“ тесе йат парать. Тěне кěмен чăвашсем хушшинче „Кěлпустан“ тенě йатсем чылайччен çӳренě. Çулсем иртнěçем иртсе пынă. Çав Кěлпустан, 17 çула çитсен, Мěтрикěн кěçěн арăмě пулать. Ăна вăл çиччěмěш арăмě вырăнне шутланă. Унăн çичě пӳлěмлě кěлетěнче 7 арăм пурăннă, кашни арăмěн пӳлěмěнче пěрер саламат çакăнса тăнă имěш. Хăшě айăпланать пурнăçра, вара, çав айăпа кура, Мěтрик арăмěсене саламатпа вěтеленě çурăмран...

Анчах çапах та, кěçěн арăмě упăшкине парăнман. Мěтрик кěçěн арăмěн ури тупанне йěп çапнă, хăш чухне леш çапах та ним пулман пек ташланă. Ех, мěншěн еп кěнеке çыракан пулман-ши? Тем çырнă пулăттăм çав истори çинчен. Вěренмен çав. Вěренме те май пулман пире...

—... Пěрре çапла, çимěк умěн, лăпкă тӳлек ир, пěтěм чěрчун хаваслăхпа вăраннă вăхăтра, Мěтрик чěркěмěл пек тăрă, сиксе йухакан çăл кутěнче çăвăнса ларнă. Çăвăннă чухне вăл хăйěн кěçěн арăмě пынине те асăрхайман. Çын çунатне çын курма йураман имěш. Вара вăл ывăннă кăвакарчăн пек, пěчěк çуначěсене ластăрах сарса ӳкнě те, урăх тăрайман. Йерипен лăпах хупнă вăл хурчăкала куçěсене. Çав вăхăтра çав таврари пěтěм вěçен кайăксем хурлăхлă йурă йурласа йанă. Пěтěм тискер кайăксем тискер сасăпа хайăррăн уласа йанă имěш. Çакăн пек иртнě вара „Хурчăка Мěтрик“ ěмěрě. Тěлěнмеле!.. Виç-Пӳртсем шавах аса илсе йумахлаççě вара çак аваллăхран йулнă халлапа.

Ну, мěн тăвăр есěр? Кайран хăй те пуçне çийет Кěлпустан. Çав тери йуратнă вăл упăшкине, тата çав тери курайман. Упăшки вилсенех, çав „Йуман кӳлли“ хěррине пырса, паçăр асăннă уйар аçа çапнă йуман тěлěнче шăтса ӳснě çамрăк йуманран çакăнать. Çавăнтан вара тěпсěр кӳлě те „Йуман кӳлли“ текен йат илет.

Чăннипе, çунатлă пулман пуљ те ěнтě çав Мěтрик, халăх халлапě çапла калать. Каскалас ěçе питě йуратнă

вăл, темиçе кирлĕ-кирлĕмарсем шутласа кăларнă. Кĕçĕн алăк пысăкĕш çунатсем туса, кĕлетсем çинчен сикетчĕ, тет, имĕш. Вара ăна „Хурчăка Мĕтрик“ тесе, киревсĕр ĕçсем тăвакан çын вырăнне шутлама тытăнаççĕ. Ун чухне йароплансем пулман вĕт. Сывлăшра вĕçессе те шутламан, ун çинчен шухăшлама та хăранă. Астăватăр-и, йепле епĕ пĕлтĕр акатуйĕнче хам та хурчăка пекех улăхса кайрăм? Çавăн чух пĕтĕмпе пĕр 50 çул таран çамрăкланнăн туйăнчĕ... Е-е, кам шутланă хаљхи ырлăха курасса? Вăхăт иртет вĕт. Вара, пурăна киле, йал та пысăклана пуçланă... Хурчăка Мĕтрикĕн темиçе сыпăкри тăхăмĕ тетчĕç Сăрмакай пуйана. Вăл паçăр асăннă „Йуман кўллине“ лаках курăс тултарса мунчала тăваŤчĕ. „Ман асатте кўлли ку, ман кўлĕ“—тесе пĕр çынна та йахăнне те йамасчĕ кўлĕ патне. Куштансем ун майлă пулнă ĕнтĕ, йалти йатлă çын вĕт, мĕн тăвăн ес? Ерех тĕнчене тытнă унчухне. Çавăн патĕнче „хырăм тăрантрăм“ епĕ çур ĕмĕр. Çĕрĕн-кунĕн йытă пек ĕçлеттеретчĕ. Çур ĕмĕр иртрĕ ун чăптине çапсах...

...Револјуци хыççăн, шалçи тулчĕ вара Сăрмакайăн. Хĕрлисем йала пырсан, револјуцийе хирĕç тăнăшăн, пуппа иккĕшне илсе кайрĕç те... те çĕре, те çўле хучĕç, çук çавăнтан вара. Çав вăхăтсенче ун „аслашшĕ кўлли“ тавра хаљхи пек йешĕл пурçăн тĕслĕ йем-йешĕл хăмăш та лăпкă çилпе чăшăлтатса лармасŤчĕ. Лутра сарă хăйах та шапа лăйми анчахчĕ. Халĕ хăвăр та пĕлетĕр—унăн тавра сат, çĕнĕ сат. Çавăнтах колхозăн кирпĕч савăчĕ сарăлса лараŤ. Çĕнĕ „Йуман кўллинчен“ тытнă пулăсем те пит аван апат вара.

— Ой, йой-йой, курнă ĕнтĕ, тўснĕ! Хаљ сирĕн, çамрăксен пурнăç-и вăл?—Рай! Пурнăç мар, хаваслăх анчах!..

Вот çапла, ачамсем, çапла... Пирĕн йалта тата тепĕр тĕлĕнмеле çын пурăннă. Аљи тесе чĕннĕ ăна. Вăл хăйĕн сĕрме купăсне сĕрсе йарсан, йĕрсе ларакан—кулса йама пултарнă; уксах—ура хуçса ташланă, кулакан—йĕрсе йама пултарнă, ĕрĕхсе кайнă туй ăйăрсем—чарăннă, ывăннă лаша—татах вунă çухрăм чупнă теççĕ,—тет Микулай старик.

Итлесе ларакансем пурте кулса йараççĕ.

Микулай пичче халăх чĕлхи çине авалран çыранса йулнă вăрăм роман сыпăкĕсене пĕр кĕнекесĕрех, кĕскен каласа пачĕ. Ун калавĕ чылайăшне тĕлĕнтерчĕ, хăшне култарса та илчĕ вăл.

Çамрăксем Микулай пичче каланине хăт хăçан та ырă кăмăлпа итлесе йышăнаççĕ. Вăл пуйăс çинчи çамрăксемшĕн те чăпта çапнă çĕрти пекех йуратнă аслă йулташ.

Пуйăс, ик-виçĕ хут умлăн-хыçлăн хытă кăшкăртса, пĕчĕк вăрмана витĕр çурса тухрĕ. Вăл кăшкăрнине хирĕç таçта айакра тепĕр пуйăс кăшкăрнă пек туйăнчĕ те лăпланчĕ. Паровоз, васкамасăр, мăнкăмăллăн сывласа чашкăрать. Ун трубинчен палкаса тухакан хăмăр-кăвак тĕтĕм йăванса, пĕтĕрĕнсе вĕçсе ирĕк уйсем çийĕнче ирĕлет.

* * *

Мускав инçе йулмарĕ. Пуйăс малала вăркăннипе пĕрлех Мускавĕ хăй те пуйăса хирĕç шăвăнать.

— Эй, гражданин, ваш билет?—терĕ те кăкăрĕнчен кăт! тĕкрĕ Лаврентн паçăртанпах çывăрса пыракан Петĕре. Петĕр тăрса ларать те билет ыйтакан кондуктăра шыраса каллĕ-маллĕ пăхкалать.

— Мĕн ес ирхи тăмана пек пăхкалатăн?.. А, хăй çичĕ çухрăмран лаша мĕн тĕслине уйăрса илетĕп тесе мухтанать.

— Ха-ха-ха! Ну каларĕ те Гриша!

— Кунта Шупашкар уйĕнче мар вĕт, Мускава çитетпĕр,—тесе хурать Петĕр кулакансене хирĕç.

Вакун çинчи екскурсантсем пурте пĕр харăссăн ахăлтатсах кулса йараççĕ.

* * *

Пуйăс çине малтанхи хут ларсан, вăл хут кама та хумхатса тĕлĕнтерет. Праски, халиччен Шупашкарта çеç пулнă чăптаçă, ударницăсен çлотне çеç автобуспа кайса курнăскер, вăрăм çула малтанхи хут тухнă. Халь ĕнтĕ вăл куçпа виçме çук симĕс уй-хирсем урлă кайса

ёмёр йурпа витённё ҫӳлё тусемпе шӑрӑх йенчи нихҫан ҫулҫӑ тӑкман йешёл вӑрмансем патне ҫитсе курма, темиҫе хулана курса паллашма екскурҫҫийе тухнӑ ударницӑ—чӑптаҫӑ.

Праски ҫитённё хёр. Мӑшӑр кӑвак пурҫӑҥ лентӑпа йавса ҫивётленё ҫивётёсем, тулли кӑкӑрне тӑп тытса тӑракан хура чёнтёрпе тытнӑ шурӑ саппунё, тата ҫыпӑҫулӑ алӑпа тунӑ чӑваш тёрилё сатин кёпи—унӑн килёшӳлё пӳне тата ытларах илемлетеҫҫё. Кӑвак кӑвакарчӑнӑн пек куҫёсем, пиҫсе ҫитнё панулми пек сӑнпичё йаланах уҫӑ кӑмӑллӑн йалкӑшаҫҫё. Трак районёнчи „Стрела“ йатлӑ чӑпта ҫапакан ертел йатне илтсенех, куҫ умне тӳрех ҫак уҫӑ кӑмӑллӑ хёр—Праски тухса тӑрат̆. Вӑл иртнё ҫезонра та, Чӑваш республикё 15 ҫул тултарнӑ йачёпе пыракан производствӑлӑ похода хутшӑнсан, хӑйён планне 200 процент тултарса—2150 чӑпта тёртме ёлкёрет. Праски хӑй тёртсе тунӑ чӑпта пирён ҫӑмӑл промышлённӑҫра тавар тёркисене чёркемеле паха тарӑ пулса тӑнине, вӑл пулмасан, ун вырӑнне хаклӑ пир·авӑр йе ҫитцӑ тавраш͡ё тивёҫҫёр сайа кайасса та лайӑх ӑнланат̆. Ҫавӑнпа вӑл хӑйён ёҫне пикенсе туса пырат̆.

Иртнё хёлте Праскисен „Стрела“ ертелёнче, ҫёнёрен лартнӑ маҫтӑрской ёлкёрейменнипе, чӑпта тёртекен бригадӑсем уйрӑм пӳрт-ҫуртсенчех ёҫленё. Ҫавах та ёҫ аптраман. Ҫитес ҫулта, маҫтӑрскойра ёҫлеме тытӑнсан, „Стрела“ ертелре чӑпта ҫапас ёҫ пушшех те пысӑк ӳсёмсемпе малала каймала.

Праскипе пёрле екскурҫҫине тата тӑхӑр ҫын кайаҫҫё. Вёсем пётёмпе вуннӑн. Ҫак вунӑ ҫын хушшинче: Амурцёв Лаврентти—Чӑвашкуљпромсойузра ёҫлекен—екскурсантсен пуҫё; Йаргейёв (Йарки) Ваҫили, Таниле Микулайё—Ишлей районёнчи „Алино“ промколхозран; Кириле Петёрё—Ҫёрпӳ районёнчен; Капитонӑвӑ Саҥка—Шупашкар районёнчи „Арӑслан“ йатлӑ ертелрен; Иванов Николай—Ишлей районёнчи Вӑрманкас ертелёнчен; Ҫтенке Елекҫейё—Ишлей районёнчи Чаканар ертелёнчен, тата виҫё ҫын Ишекпе Мамӑшри чӑпта ҫапакан промколхозсенчен.

Çак вунӑ çын пурте чӑпта ӗçне матур туса пыракан паллӑ ударниксем. Çавӑнпа та вӗсене Чӑвашкуљпромсойуз пысӑк премипе парнелесе, инçетри екскурççийе—Кавказа кайса килмеле тунӑ. Çул майӗпе вӗсем, кайнӑ чух—Мускавра, таврӑннӑ чух—Сталинградра чарӑнса тӑрса, вӑл хуласенчи паллӑ савӑтсемпе тата Мускаври çӗр айӗнчи чукун çулпе (метропа) паллашмала пулнӑ.

Çул çинче пирӗн чӑптаçӑ екскурсантсем пурте пӗр çӗрлӗн пулса, вӑхӑта пӗр-пӗринпе савӑнӑçлӑн калаçса иртереççӗ.

* * *

Пуйӑс йерипенӗн шӑвӑнса Мускавала пырса кӗрет. Чукун çулӗн икӗ йенӗпе те тӗрлӗ хапрӑк-савӑтсем сарӑлса лараççӗ. Вакун чӳречинчен пӑхмасӑр никамӑн та чун чӑтмасть. Темиçе йуппе сарӑлса кайнӑ чукун çулӗсем тӑрӑх унта та кунта паровоз хашкани, вӗсем кӑшкӑрашни илтӗнет. Пуйӑссем кӗрлесе иртеççӗ.

— Акӑ Мускав! Вӑл куç умӗнче. Тахçантанпах курас килнӗ аслӑ хула, хуласенӗн пуçӗ—Мускав куç умне тухса тӑрсан, хӑйне халиччен курман çынна тӳрех ӑсран йараť, тӗлӗнтерет. Кӑкӑртан сиксе тухас пек таклаттарса тапаť хаваслӑхпа çӗкленнӗ чӗре! Умра Совет столици—аслӑ Мускав...

## Мускавра

Кам кӑна çук-ши Мускав хулин аслӑ вокзалӗсенче? Кам çеç килсе кӗмест-ши çак вокзалсем урлӑ чаплӑ Мускава? Калама çук аслӑ çӗршывӑмӑрӑн тӗрлӗ кӗтессинчен, çамрӑк пионерсенчен тытӑнса шуралнӑ старик-сене çитиччен, тӗрлӗ чӗлхелӗ халӑх çыннисем çак чаплӑ Мускавра, çӗршыв чӗрине тӗрлӗрен ӗçпе йе йурийех курма пуçтарӑнаççӗ. Инçетри хӗвелтухăçӗнчен, хӗвеланăçӗнчен, пăрлă çурçӗртен, шăрăх кăнтăр çӗрӗсенчен куллен умлăн та хыçлăн чашкăрса пыракан пуйăссемпе шутсăр халăх Мускава, йе Мускавран кайала таврăнаť.

Шавлаť Мускав. Кӗрлет Мускав. Хуранри шыв вӗре-

нĕ пек вĕрет унăн варри. Чаплă Мускав, хăватлă Мускав!

Мускав пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи пролетарисен—ĕç-çыннисен столици. Çавăнпа та Мускава курасшăн çĕ-рĕн пур пайĕнчи ĕçхалăхĕ те пĕтĕм чĕререн тĕмсĕлет. Çавăнпа та „Мускав" тенĕ сăмах пĕтĕм ĕç етемлĕхĕн чĕрине хаваслантарать, паттăрлантарать. Анчах çак ху-шăрах Мускав йачĕ чул чĕрелĕ йунĕçевçĕсене хайар-рăн çӳçентерет, тарăхтарать, кĕвĕçтерет, сехĕрлентерет.

Вокзал шавĕ хăватлăн йанăрать хăлхара. Кăткă пек кĕшĕлтетекен тĕрлĕ чĕлхелĕ халăх калаçнипе пĕр-пĕрне сасă паракан паровозсен уçă сассисем пĕр тĕвве пĕр-лешсе кĕвĕленеççĕ. Ытарма çук илемлĕ, анкарти пек аслă вокзал! Кам кăна çук-ши ку вокзалра?

Пĕр самант хушши тĕлĕнсе тăнă хыççăн, пирĕн чăп-таçăсем туриссемпе екскурсантсене кĕтсе илекен пĕр тараватлă çынпа пĕрле, Мускав хулинеле тухрĕç.

Акă Мускав варри. Акă хĕрлĕ плошчĕт. Кремĕл. Унăн пĕлĕтеле кармашакан башнин ылттăн тĕслĕ тăрри инçетренех йăлтăртатса курăнать. Çав башнĕ çинчи се-хет кашни каçах, çурçĕр тĕлĕнче, 12 сехет çапсассăн, „Коминтерн" радиостанци урлă пĕтĕм çĕр чăмăркки тавра çĕнтерӳлĕ „Интернационал" йуррйне йанăратать. Çав сехетех кашни çапмассерен пĕтĕм тĕнчери проле-тариле революци тĕнчипех çĕнтересси çывхарнине пĕл-терет. Мĕншĕн тесен, вăл революцийĕн тĕп штабĕ—Мускавра, Кремĕлре. Кремĕлпе йунашарах мавзолей. Мавзолейре ĕмĕр вилми Ленин ӳчĕ.

Мускав. Унта çăра пĕлĕт пек халăх. Йĕпкĕн хура курăнакан шăнкăрчă кĕтĕвĕ пек иртсе пĕтейми авто-мобилсем вĕркĕшеççĕ. 10—12-шер хутлă çуртсем çине пăхсан, картус та хывăнса ӳкет. Илемлĕ туй кӳмисем пек трамвайсем сумлă шăнкăравĕсемпе йанăратаççĕ. Пĕрре йарса пусатăн-и, йе мăшăр куçна хупса илетĕн-и, санăн умăнта кашни расах—çĕнĕ сăн-сăпат, çĕнĕ карти-нă уçăлса пырать.

Праскийе Мускавра пĕр çимесĕрех темиçе кун пу-рăнассăн та туйăнчĕ. Çапла тĕлĕннипе вăл, çĕр айĕнчи Мускава анма мрамăр пусмасем çине çитсе тăнине

те асăрхаймарĕ. Акă вĕсем, пĕтĕм кĕлетке курăнакан мрамăр чул пусмасем çине вăтаннă пек именсе пусса, пĕр сисĕнчĕксĕр çĕр айне анса çухалаççĕ. Айала анса çитсессĕн—тепĕр Мускав, çĕр айĕнчи çĕнĕ Мускав.

Çĕр айĕнчи Мускавăн хаклă йышши шурă мрамăр чулĕнчен тунă çтенисем çинче, куçкĕски çинчи пек, пурте курăнаť. Унта ху мĕлкӳвех санпа пĕр харăс, йулташу пек хаваслăн, уçă кăмăллăн, савăннипе сана тем каласшăн пек пыраť. Темиçе лампăлă електрицă љустрисем çĕр айĕнчи Мускава çĕр çинчи Мускав пекех йалтăртаттараççĕ. Ак инçе мар, темĕскер музăк пек йанăрарĕ. Харăссăн çаврăнчĕç чăптаçăсем. Инçе те йулман, çӳлти пекех илемлĕ вакун, анчах ку тата темиçе хут чаплăрах. Пăхсан, куçсем шарăçса кайаççĕ: ку çĕр айĕнчи трамвай мĕн! Вăл çитсе чарăнсанах ун кĕленче алăкĕсем хăйсем тĕллĕн йари уçăлаççĕ. Кĕме хăйулăх çитмест. Йепле лармала-ши çак симĕс пуставлă, пружинăлă дивансем çине? Пурте кĕрсе вырнаçнă хыççăн, кĕленче алăксем хăйсем тĕллĕнех таччăн хупăнаççĕ те... трамвай вакунĕ çигнал парса хускалаť. Чӳрече витĕр васкавлă Мускав çыннисем вĕлтлетсе йулаççĕ; куçкĕскилĕ мрамăр çтенасем çинче икĕ йенĕпе татах та икĕ трамвай пынă пек, трамвай мĕлкисем ăмăртаççĕ. Кашнинех ĕлĕкрех „Чике Йакур—хур сухал" йепле çĕр айĕнчи ылтăн алăклă кĕленче çуртра пурăнни çинчен каççерен çĕрĕ-çĕрĕпе тăснă халлап аса килĕнет.—Тен чăнах та çав халлапри пурнăç мар-ши ку? Тĕлĕнмеле тĕлĕк мар-ши тата? Йепле-ха, çĕр айĕнче çӳлтинчен те аванрах?—каллех тарăн шухăша кайаť Праски, Праски çеç мар,—ыттисем те.

— Тĕлĕнмеле!—терĕ Микулай пичче те хуллен, сăмахне каланă майĕпе аллисене пĕççи тăрăх çапса...

— Çапла, Микулай пичче. Большевиксем тунă вĕт кăна,—тет ăна хирĕç Ваçили.

— Шупашкарта çакăн пек пулсанччĕ вăт!.. Ех, пăххалĕ ав, йепле, хĕвел пекех ламписем!—тĕлĕнет Петĕр.

— Ламписем çитес кĕркунне хамăр колхозра та йалтăрĕç акă... Çĕр айĕнчи хула Шупашкарта кирлех те

мар, пĕчĕкçĕ-ха, вĕт, вăл. Хаљ унта автобуссем йышланаççĕ ĕнтĕ,—тет ăна хирĕç Йаргейĕв.

Трамвай музăклă çигналпа каллех чарăнчĕ. Кĕленче алăксем хăйсем тĕллĕн йарийех уçăлса кайсан, пирĕн екскурсантсем çĕр айĕнчи Мускавран çĕр çинчи Мускава—Сокољнĕк сатĕнчи станцăна, каллех мĕлке курăнакан мрамăр пусмасемпе улăхса тăчĕç. Вĕсене Сокољнĕк сатĕнчи вĕçен кайăксем ачаш чĕлхелĕ йурăсемпе йышăнса илсе сума сурĕç.

Аллейăри пĕр лапсака тăрăлă çамрăк çăка çинчи саркайăк уйрăмăнах Праскийе хисепленĕ пек туйăнчĕ.

Кунĕпе çӳресе Ленин мавзолейĕнче, зоопаркра, кулътурăпа кану сатĕнче, тĕрлĕ музейсенче пулнă хыççăн, екскурсантсен татах тем чухлĕ курмали йулнине пăхмасăрах, хĕвел Мускав хыçне анса ларса çухалчĕ. Мускав мĕлйунлă лампăсемпе çунса йăлтăртатма тытăнаť.

Çак вăхăтра, кунĕпе Мускавпа паллашса ĕшеннĕ пек пулнă екскурсантсем ескурс-базă гостиницине кĕрсе канма вырнаçаççĕ.

Екскурс-базăра тарават çынсем ĕçлеççĕ. Вĕсем пирĕн чăваш екскурсанчĕсене пĕр ерне таранах пурăнма сĕнеççĕ, нумай кăтартса çӳресшĕн, нумай çинчен пĕлтересшĕн вĕсем. Анчах чăптаçăсен татах инçе çула каймала, унта кайса килме вăхăт чылай кирлĕ. Çавăнпа та вĕсем Мускавра вăраха йулма пултараймаççĕ.

* *
*

Тепĕр кун каллех пуйăс çине... каллех вăрăм çул. Мускавран тухса Сочийе çитиччен 2500 çухрăм рељсă тăсăлаť. Умра — Подољск, Тула, Орйол, Белгород, Харкăв, Майкоп, Туапçе т. ыт. хуласем те.

Мускав аслă, Мускав пысăк, Мускавăн темĕн те пур. Станцăри паровозсем каллех инçе çула хатĕр. Вĕсен сассисем Мускава тепĕре çавăрăнса çитиччен вăхăтлăха сывпуллашнăн туйăнаççĕ.

Умра вăрăм çул. Хыçа темиçе хула йулмала. Вакун чӳречисенчен халиччен килнĕ чухнехи пекех—аслă тинĕс пек ыраш пуссисем, хуллен кашласа ларакан пĕчĕк вăрмансем, сип-симĕс пустав сарнă пек сарăлса

выртакан йем-йешӗл тырă уйӗсем, çичçӗр çитмӗл тӗслӗ чечекпе йăлкăшса ларакан улăхсем, йалсем, сатсем, тутăр сӗлтесе ăсатакан хӗрсемпе пралук çинчи чӗвӗлти чӗкеçсем курăнаççӗ.

Кашниййӗн куçӗ умӗнчех—Мускав, çӗр айӗнчи Мускав, мавзовлейри Ленин, зоопарк, культурăпа кану паркӗ, музейсем тата ыттисем те тем те пӗр тăраççӗ выльанса.

Пуйăс ыткăннăçемӗн малала ыткăнать. Вакунăн пӗр кӗтессинче ларса пыракан чăптаçăсенчен пӗрне—60 000 çын шăнăçакан культурăпа кану паркӗ тӗлӗнтерет, тепӗрне музейри сӗм-аваллăх йапалисем, çынсем, вӗсен пурнăçӗ; пӗрне ӗлӗкхи кун-çула ывăç тупанӗ çинчи пек кăтартса тăракан картинăсем тӗлӗнтереççӗ; тепӗрне хальхи машинăсем йе хула хушшинчи кăткă пек вӗшӗлтетекен капăр тумлă халăх; пӗрне çӗр айӗнчи Мускав—метро ăнран йарать, тата ытти те, ытти те.

— Ах, мӗскер çук-ши вăл Мускавра!?

— Йепле ўссе çитӗнеççӗ-ши çав слонсем?..

— Уписене астăвăр-ха тата?..

— Вăл мӗ-ӗн, çӗленсем-тӗк вара!..

— Миçе пин çӗлен-ши унта?..

— А тата, удав текенни йепле!.. Тăсăлсан, урам урлă карăнать çав. Атту, мӗн вăл пирӗн вăрманти çӗленсем? Пушă аври пысăкăшне куратпăр та: айуй, айуй! кăшкăратпăр вара...

— Леш çиллес тигăрӗсем, арăсланӗсем мӗнле тата?.. А-ах!..

— Ирӗке кăларасчӗ вӗсене, мӗн хăтланӗç-ши?..

— Ан калаç та ӗнтӗ, пур çав тӗнчере темӗн те...

— Мана леш, бегемот-и-ха çав, носорог-и, шыв вăкăрӗ пит тӗлӗнтерчӗ. Пирӗн кӗтўри ăратлă вăкăртан та пысăк вăл. Таçтан пӗтӗмпе, айакран шыва хумхантарса килет те, илемсӗр катмар тутипе хăрах майракалă пысăк пуçне шывран хăрушшăн çӗклесе кăларать. Унтан шыва сирпӗтсе тискеррӗн тулхăрать те, каллех шыва путать...

— Тӗвисем тата, тӗвисем!..

— Ха-ха-ха!—Тупнă тӗлӗнме. Тӗвесем вӗсем Хусанта та, Йӗпреçре те кӗтӗвӗпех...

— Тата леш, пысăк çăмарта тăваканĕ... Страус текенни... тата метр вăрăмĕш хÿрелĕ вĕçен кайăкĕ? Павлин теççĕ-и çак ăна? Вăт-тăк... да!

— Нийепле ыгараймарăм епĕ, леш халлапри пек, сат варринчи çавра кÿлле. Варринче шурă акăшсем, темиçе тĕрлĕ кăвакалсем ишсе çÿреççĕ... тата кÿлли тавра, пĕчĕк ĭыха пек лашасене пĕчĕкçĕ трантассем кÿлнĕ те, хĕрсе катаччи чуптараççĕ пĕчĕкçеççĕ ачасене. Тĕлĕнмеле! Ну, илемлĕ те...

— Ну, конешнă...

* *
*

Ир пулаĭ те каç пулаĭ. Кун хыççăн кун пĕр йевĕрлĕн çитсе иртеççĕ.

Пуйăс ыткăннăçемĕн ыткăнаĭ малалах. Хыçа аслă уйхирсем, йалсем, тикĕс хирсем, каллех йалсем, чуллă хуласем тăра-тăра йулаççĕ. Кайсан-кайсан, Кавказа çывхарнă май, сăртсем курăнма пуçлаççĕ, тикĕс уйсем пĕтеççĕ.

Хăвагла пуйăсăн икĕ ĕретлĕ темиçе кустăрмисем, хурçă реļсăсем тăрăх чупса, 2000 çухрăм ытла ĕнтĕ пĕр кĕввех шăрантараççĕ.

Акă умра авалран хăй илемĕпе мухтанакан лучăрканчăк сăн-питлĕ, çÿлĕ сăртсемпе хупланнă Кавказ!

Пирĕн екскурсантсен пуйăсĕ, çав сăртсем хушшипе авкаланса, Хура тинĕс хĕрринеле шăвăнаĭ. Акă пуйăс чăн-чăн Кавказ çĕрĕнче. Вăл пыраĭ малалах. Унăн пĕр йенче—çÿлĕ те чăнкă чуллă Кавказ сăрчĕсем; тепĕр йенче—Хура тинĕс, аслă Хура тинĕс вырташ хыттăн шавласа.

## Кавказра

Кавказ тесе Каçпи тинĕсĕпе Хура тинĕс хушшинче выртакан сăртлă çĕре, Йевропăпа Кĕçĕн Ази çĕрĕсене пĕтĕçтерекен çĕр пăвăнчăкне калаççĕ.

Кавказăн хĕвеланăçĕ йенче, Хура тинĕс хĕррипе выртакан кÿлĕ çумĕнчи айлăмсенче, ĕмĕр хĕлле пулман хĕвеллĕ çĕршыв выртаĭ. Екскурсантсем çак выранти

Сочи хулине çитсе чарăнаççĕ. Сочи—сывлăха йусамали вырăн. Çак хулана, çак тавраша инçетри хĕвелтухăçĕнчен тытăнса сивĕ çурçĕртен, аслă Совет çĕрĕн пур кĕтессисенчен те кашни çулах, темиçешер пин рабочисемпе колхозниксем тĕрлĕ чиртен йусанма тата канма пуçтарăнаççĕ. Таврара ытарма çук ырă çутçанталăк. Ĕмĕр çулçă тăкман йăвăçсемпе çеçкеленсе ларакан тĕрле чечексем, телейлĕ çамрăклăх пек йешĕрсе, çӳлĕ тусем çинчи ĕмĕр ирĕлми сивĕ пăрпа йур хăватне туймасăр лараççĕ. Кунта çӳлĕ, таçта çӳле кармашакан тӳп-тӳрĕ кипариссемпе метр тăрăшши çулçăлă паљмăсен айĕнчен тухас та килмест. Ăçта пăхнă унта куçа шарăçтарса йаракан чечексем. Вĕсен ырă шăршисем çын ӳт-пĕвĕнчи йăвăрлăха çухатса, çĕре пусмасăр сывлăшра вĕçсе пынă пек туйăнтараççĕ.

Çак Сочи таврашĕнчи сывлăх сатĕнче кам çеç савăнмасŏ-ши ĕнтĕ халхи вăхăтра?

Ĕлĕк кунта генералсемпе улпут таврашсем тата купцасемпе патшан тĕрлĕ чиновникĕсем анчах ашкăнса иртернĕ. Рабочисемпе хресченсем унта ура йарса та пусайман. Ăçта унта çĕр çинчи „райа“ пылчăклă хура çынсене кĕме? „Турă хушман—патша та хушман!“

Çавăн пек пулнă ун чухне.

Халĕ ун пек мар. Пайан акă ĕлĕкхи чухăнран та чухăн хресчен хĕрĕ пулнă Праски те кунта çитсе кĕчĕ. Унпа пĕрлех унăн ытти йулташĕсем те çитеççĕ. Вĕсем халĕ ĕнтĕ пурте хăйсен хаваслăхĕсене ниçта вырнаçтараймаççĕ. Çамрăк Праскипе ватă Мукулай пичче чĕрисем пĕр пекех, вĕсем иккĕш те чăн телейлĕ савăнăçлăхпа тапаççĕ.

Çитсе пăртак каннă хыççăн, хĕвел аннă вăхăтра, чăваш чăптаçисем Сочири Дендарий паркĕнче пулаççĕ. Кунта хĕвел те йалти пек мар, Мускаври пек те мар, вăл анса ларасла тата илемлĕрех курăнаŏ. Унăн хĕрӳлĕхне çухатнă вăрăм та йăваш çутă пайăркисем кипариссемпе паљмăсем çине ылттăн йарапасем çакса чечеклеççĕ. Кайарахпа çав йарапасем сисĕнӳсĕр куçран çухалса пыраççĕ. Хĕвел çине кăшт куçа хĕсерех пăхсан вăл куç умнерех пырса, пĕрре тĕттĕмрех сарă ылттăн

çунатлă арман пек, тепĕре вут чечеклĕ хĕвелçаврăнăш пуçĕ пек туйăнать. Тата кайарахпа вăл йăмăх-хĕрлĕрех кăвар тултарса лартнă çатан кунтăк (лăпă) манерлех курăнать; унтан çав лăпă пысăкланнă пек пулса, хăй ўссе пынă майăн хăвăрт тинĕс хыçне анса ларса çухалать. Хĕвел аннипе пĕрлех йешĕл-кăвак тĕслĕ хумпа шавласа выртакан тинĕс пичĕ те тăхлан тĕслĕ тĕксĕм çутă сăнпа витĕнет.

Праски хаваслăхĕ чĕрине те шăнăçмасть. Вăл хăй мĕн курнине çырса та, каласа та пĕтереймĕ. Çапах та каçхине, гостиницăна кĕрсе вырнаçсан, вăл амăшĕ патне çыру çырма васкарĕ.

Çакăн пек çырчĕ вăл хăйĕн çыруне:

„Салам сана, йуратнă анне!

Чи малтанхи йĕркерех епĕ сана, анне, хама çуратса ўстернĕшĕн тавтăватăп. Пĕтĕм чĕремрен ырă сунатăп сана. Епĕ сан сăмаххусене те манман: мана, хăвăн телейсĕр пулнă хĕрне, çуратнă. шăн та сахал мар вĕри куççулĕ тăкнă есĕ ĕлĕк. Анчах халĕ ĕнтĕ вăл кунсем инçете тăрса йулчĕç... Вăл кунсем халĕ ĕлĕкхи хăрушă халлап пек анчах туйăнаççĕ. Çапах та, çав хăрушă халлапа аса илсен, пĕтĕм çамрăк вăй-хăват пĕтĕçсе, тăшман çине ĕмĕр пусăрăнми хайар çилĕ тăвăлса капланать.

Анне! хам мĕн-мĕн курнисене сана епĕ виç кун çырсан та йалтах çырса пĕтерейес çук. Ку çырăва епĕ Сочирен çыратăп. Кунта çитиччен, вара, темле пысăк хуласем те йулчĕç пирĕн хыçа, астуса та пĕтерес çук.

Миçе хуларан кăна иртмерĕмĕр пулĕ. Кашнинех вĕсене çак йулашки 6—7 çул хушшинче паллама çук ўссе кайнă теççĕ. Ытарма çук Украинă уй-хирне. Пирĕн патăрта ўсĕçинччĕç çав йаштака топăлсемпе виноград пахчисем! Килте радиопа Мичурин сачĕ çинчен каланине илтеттĕмĕрччĕ вĕт-ха, çавăн сатĕнчи йышши йавăçсем пурте ўсеççĕ кунта.

Харкӑвра чарӑнсах тӑраймарӑр та... вӑл ҫав тери илемлӗ хула иккен! Картӑчкӑсем ӳкерме пӗлнӗ пулсан, пӗр пысӑк арчапа ҫак ытарайми картинӑсене туллиех ӳкерсе таврӑннӑ пулӑттӑм. Азӑв тинӗс хӗррине ҫитсен, сулахай йенче, йешӗл чатӑр айӗнче, Таганрог хули ларса йулат, сылтӑм йенче—вӑхӑтпа сирӗлми тӗтрелӗ, куҫпа виҫме ҫук аслӑ тинӗс пуҫланат. Хумӗсем аслӑ тинӗсре ӑмӑртнӑ пек пӗринчен пӗри малтан мала кайса инҫете ыткӑнаҫҫӗ. Ҫак тинӗс Хура тинӗспе пӗрлешет. Хаљ епӗр ҫав Хура тинӗс хӗрринче...

...Тата пӗр тӗлӗнмеле лӑпкӑ тӳлек ир, Кавказ тӑвӗсем хыҫӗнчен ылтӑн хӗвел ҫӗкленсе ҫитсен, пирӗн пуйӑс лайӑх пынӑ ҫӗртенех тарӑн сивӗ нӳхрепе аннӑ пек, сӗм-тӗттӗм ҫӗр айне кӗрсе ҫухалчӗ. Васкамасӑр, йерипен сывласа пырат пуйас ту тӗпӗнчи ҫӗр айӗнче. Темиҫе хут та тухрӑмӑр ҫавӑн пӗк. Тусем хушшинче пынӑ чух ҫӳлеле пӑхсан, пӑхма та хӑрушӑ! Чӑнкӑ сӑртсем ҫумӗнче ҫакӑнса тӑракан тем пысӑкӑш чулсем, кӗҫ-вӗҫ татӑлса анса, пирӗн пуйӑса шӑрпӑк корбокисене лачӑрах пусса ватнӑ пек ватассӑн туйӑнаҫҫӗ. Ҫапла шутласан пӗтӗм ҫан-ҫурӑм ҫӳҫенсе кайат. Тусем хушшинчен тухатӑн та, каллех чуна темиҫе хут ҫамрӑклантарса йаракан талкӑшӗпех сип-симӗс сат-пахчилӗ тӗнче пуҫланса кайат.

Донбасри сӑрт пек купаланса тӑракан ҫӗркӑмрӑк куписемпе Майкоп таврашӗнчи нефтӗ вышкисем халӗ те куҫ умӗнчех. Пирӗн ҫӗршыв пуйанлӑхне, анне, епӗ мар, такам та ҫырса пӗтерес ҫук...

.. Йепле илемлӗ ӳсме пултарнӑ-ши кунта йӑвӑҫсем? Тата курортри канмали ҫуртсем умне пырсан, вӗсем пӗтӗмпех хаклӑ ахах йе мерчен чулӗ пек йӑлтӑртатса лараҫҫӗ. Пусми-картлашкисен икӗ йенӗпе ӗмӗр ҫулҫӑ тӑкман сарлака ҫулҫӑллӑ йӑвӑҫсем ӳссе лараҫҫӗ. Ҫавсенчен инҫех те мар, фонтансенчен сирпӗнсе тӑракан тӑрӑ шыв, хӗвел ҫутипе темиҫе хутлӑ асамат кӗперӗ кӑтартса, ылттӑн шӑрҫасем сапнӑ пек йӑлтӑртатат. Вӑхӑтпа

ху ăçтине те ĕненместĕн. Киле çитсен пурне те тем те каласа тĕлĕнтерме пултаратăп ĕнтĕ. Ун çинчен „Куљпромсойузри“ И. А. Антонăвпа Т. А. Алексçейĕв йулташсем те лайăх асăрхаттарса йанăччĕ. Çитĕ, анне. Çырса пĕтерес çук. Кунта кашни утăмрах çĕнĕ йапала. Ыран ирхине Хура тинĕс çинче пулатпăр. Телейлĕ епĕ, анне! Ĕлĕк пулсан, Шупашкара та кайса курайман пулăттăм.

Сойăна, Матрӳнене, Нинăна тата Арçенийе те уйрăмăнах—салам. Çырăва илсенех вĕсене чи малтан, тата ытти тантăшсене те вулаттар.

*Чунтан йуратакан хĕрӳ Праçук.*

*Сочи. Хура тинĕс хĕрри*“.

Праски, çыруне хăй ăшĕнче тепĕр хут вуласа тухрĕ те, ăна малтанах адрĕс çырса хатĕрленĕ конверта хурса пусма умĕнчи йешчĕке тухса йачĕ.

Айхи вĕçнипе часах çывăраймарĕ вăл. Ун пуçĕнче тĕрлĕ шухăшсем çиçĕм пек çиçсе иртрĕç. Пĕр шухăшĕ çинче чарăнасшăн пулчĕ вăл, чарăнаймарĕ; тепĕр шухăшĕ çине куçрĕ, каллех çиçсе иртрĕ вăл шухăшĕ те... Вара, йулашкинчен, ун шухăшĕ Лаврентни çинче чарăнчĕ. Лаврентни те Праскишĕн тахçантанпах çунать, анчах Праски шанмасть ăна, ĕненмест. Йуратнă пек те туйăнать вăл, йуратман пек те.

... Праски нумайччен шухăшларĕ ун çинчен, вара гостиницăн çемçе минтерне ачашшăн, çепĕççĕн ыталаса канлĕн çывăрса кайрĕ.

Гостиницăра нимĕнле сас-чĕвĕ те çук, лăпкă. Праски çывăрса кайсан, мал йенчен часах Кавказ каçĕн чаршавĕ сирĕле те пуçларĕ.

* *
*

Тепĕр кунне ирех пирĕн екскурсантсем кĕленче пек асфаљтлă çулпала, вĕр-çĕнĕ автобус çине ларса, Гагры хули йеннеле çил пек вĕçтерчĕç. Аслă çулăн икĕ йенĕпе ларакан темиçе тĕслĕ йăвăççем, вырăнĕ-вырăнĕпе, хăйсен лăстра çулçисемпе машинă çинче ларса пыракансене кăштăрт! пуçран ачашласа йулаççĕ. Çул

хӗррипе ларакан чечексем те екскурсантсене ырӑ сунса пуҫ тайнӑ пек туйӑнаҫҫӗ. Машинӑ час-часах темиҫе кукӑр туса илнӗ май, хӑш-пӗр чух, ҫул айӑккинчи ҫӑра ҫулҫӑлӑ йӑвӑҫсем хушшипе инҫетри Ельбруспа Казбекӑн шурӑ тӑррисем курӑнаҫҫӗ те, каллех йешӗл ҫулҫӑсем хыҫне пытанаҫҫӗ. Совет ҫӗршывӗн чӑн илемлӗ вырӑнӗсем. Кунта кашни кӗтесрех тӗрлӗ ҫимӗҫ йӑвӑҫҫи сарӑлса ларма пултарать. Сарлака ҫулҫӑлӑ пальмӑсем айӗнче шӑрӑх хӗвелрен пытанма та ырӑ. Тата ҫак сат-пахчи пек вӑрмансем хушшинчех ҫӳлӗ тусем тӑрринчен йухса анакан чӗркӗмӗл пек тӑрӑ шывсем шӑнкӑртатса йурласа выртаҫҫӗ. „Боржом" ӗҫес тесен, ӑна ҫӑл куҫӗнченех ӑс та ӗҫ. Тата мӗн ҫех ҫук-ши ҫак таврара!

Екскурсантсем Гагры хулине ҫитсенех хӑйсем ӑҫта ҫитнине те ӑнланмарӗҫ. Ту-хула ку, те тусем хушшинчи вӗҫӗ-хӗррисӗр илемлӗ чӑтлӑх сат? Гагры хулинче лимон, апелҫин, виноград, лавр йӑвӑҫҫисем, хӗрлӗ йӑвӑҫ тата ытти ачаш йӑвӑҫсем те ҫитӗнеҫҫӗ. Тӗлӗнмеле кунти ҫӗршывра! Тӗлӗнмеле Кавказ пуйанлӑхӗнчен!

Ҫӳлӗ тусем ҫине улӑхмашкӑн ҫӑмӑл мар. Пирӗн тин ҫеҫ ҫитнӗ екскурсантсем ҫав тусем мӗн ҫуллӗшне те пӗлмеҫҫӗ-ха. Часах хӑпарса ҫитес пек туйӑнать вӗсем ҫине айалтан пӑхсан. Ҫавӑнпа та вӗсем, Гагры хулине ҫитсенех, ҫав ҫӳлӗ тусем ҫине улӑхса пӑхмаваскарӗҫ.

Акӑ хӑпараҫҫӗ вӗсем ҫӗлен пек авкаланса выртакан пӗчӗк ҫулсем тӑрӑх пӗлӗт ҫинеле. Ӗлӗк ку ҫулсемпе Абрек Заурсемпе Зелим Хансем анчах пытанса ҫӳренӗ пулӗ.

Халӗ вӗсем тӑрӑх шутсӑр туриссемпе екскурсантсем пурте хӑпарса пӑхма талпӑҫаҫҫӗ. Ҫулӗсем питех те тӑкӑскӑ, хӗсӗк. Акӑ пирӗн екскурсантсем чылай ҫӳле улӑхаҫҫӗ. Вӗсен умӗнче, ҫӳлте—ӗмӗр ирӗлми хулӑм сийлӗ йур; айалта йем-йешӗл тӗнче. Йешӗл айлӑмпа йунашарах ҫутӑ хумӗсемпе шавлакан аслӑ тинӗс сарӑлса выртать. Ҫӳле пӑхсан—ҫӗлӗк хывӑнса ӳкмеле, айала пӑхсан—пуҫ ҫаврӑнать. Айалта, тусем хушшинче, шыв шӗрлени анчах илтӗнет. Ӑнсӑртран, айалала татӑлса анас пулсан, йулашки хут сывласа йулма ҫеҫ ӗлкӗр, вара тек сывлаймӑн та. Хушӑран, тусен тайлӑмӗнче

Кавказ чăрăшĕсем, кĕрхи пахчана ларса йулнă сайра кантăрсем пек, тăлăххăн кашласа лараççĕ. Екскурсантсем çӳле улăхнă майăн, тусен çиййĕпе шăвакан çăмăр пĕлĕчĕсем те вĕсемпе тан пулса, çăра тĕтре пек йăсăрланаççĕ.

Мĕн чухлĕ çӳле улăхнă майăн, Гагры хули хуран тĕпĕнче ларнă пек çеç курăнса кайат̆.

Акă екскурсантсем çăмăр пĕлĕчĕсем çӳлĕшĕнче, çӳлте упаленеççĕ. Вĕсен çӳлĕшĕнчен пăхсан, хĕвеланăç йенче Хура тинĕс пĕр вĕçĕмсĕр инçете тикĕссĕн çутăлса выртни курăнат̆. Айалта, тусем хушшинче, йем-йешĕл тĕнче; тата леререх унта та кунта каллех пысăк курпунлă тусем тăсăлаççĕ. Çӳлте — ĕмĕр выртакан шап-шурă йур та пăр; айалта— çеçкери чечексем çиçкĕнеççĕ.

Нумайччен тĕлĕнсе тăчĕç пирĕн екскурсантсем тусинче, нумайччен калаçрĕç.

Сăрт тăррине хăпарса ансан, екскурсантсем кашнийех мунчала пек çемçелчĕç. Çак вăхăтрах вĕсене, ывăннă чăптаçăсене, кашни паљмă хăйĕн сулхăнне выртса канма ӳкĕтлет. Ĕшеннĕ çынсем лапсака йăвăçсем илĕртнине хапăлласа, вĕсен айĕсене—сулхăна выртса канаççĕ.

* *
*

Тепĕр ирхине хĕвел Сочири пекех илемлĕн, çӳлĕ тусем хыçĕнчен çĕкленсе, ытарайми сатсен йешĕл çулçисем витĕр йăлтăрарĕ. Сатсемпе урамсенче шăнкăртатса йухса выртакан чĕркĕмĕл пек тăрă сăрт шывсене хĕвел çутти ӳксен татах та илемлетрĕ. Çак шыв ирхине такама та пите-куçа çăвас килтерет. Хура тинĕс йенчен вăхăтпа лăпкăн та ăшшăн, вăхăтпа сулхăнрах та уççăнрах вĕрсе тăракан çилĕ, пурин чĕрине те çăмăллатса çĕклентерет.

Екскурсантсене паçăртанпах Хура тинĕс хĕрринче кĕтсе тăракан „Абхазия“ прахут виççĕмĕш хут кăшкăртат̆. Унăн уçă сасси пĕр йенне—сатсемпе чуллă тусен хушшине, тепĕр йенне—аслă тинĕс çийĕн уççăн йанăрарĕ. „Абхазия“ çине ларса вырнаçсан, вăл, хурçă

хура сăпка пек йарăнса, инçетрен ыткăнса килекен тискер хумсем çине ыррăн сиктере пуçларĕ.

Прахут вĕççĕр тинĕс çинеле шăвăннă майăн, Гагры хулипе йешĕл çыран хĕрри, тата вăл çыран хыçĕнчи çӳлĕ тусем кайала чакнă пекех туйăнаççĕ. Çӳлĕ тусем, хăйсен пуç тӳпинчи шурă чăлмисене силлесе, тинĕс хумĕсем çинчи хурçă сăпкапа сывпуллашрĕç.

„Абхазия" паттăррăн кĕрешет шултра хумсемпе. Хумсем, айакранах, хайаррăн пĕтĕм тинĕсе картлантарса пырса, „Абхазия" прахут çинеле пĕрин урлă тепĕри сике-сике ыткăнаççĕ. Хурçă сăпка хумсене хирĕç çĕкленсе, таçта вĕçме хатĕрленнĕ пек пулаť те, каллех хумсем хушшинеле чăмаť.

Тинĕс!.. Вĕçĕ-хĕррисĕр шыв. Вĕçĕ - хĕррисĕр тинĕс. Авалтан шутласан çак тинĕс çинче миçе етем путса пĕтнĕ пулĕ? Йунпа витĕннĕ вăл иртнĕ вăрçăсенче. Халĕ акă мирлĕ тинĕс вăл: ун çинче вăрçă сасси ахăрмасť, тупăсен сасси кĕрлемест. Ун урлă час-часах епĕр кӳршĕри Турци патшалăхĕпе алă парса тытатпăр, пĕр-пĕрин патне хăнана та çӳретпĕр. Ёлĕк чухне, вырăс патшисемпе тĕрĕк султанĕсен саманисенче, çав Турци патшалăхĕпех миçе хутчен çапăçса йун тăкман пулĕ, мĕн чухлĕ карап путарман пулĕ çак Хура тинĕсре?!

— Тинĕс! Ăçта вĕçӳ сан, ăçта хĕррӳ сан, хайар Хура тинĕс? Ма есĕ çав тери силлесе халиччен килмен хăнусене хăрататăн? Таврара вĕççĕр, хĕррисĕр шыв. Тен веçех уйăрăлмарăмăр-и епĕр тăван типĕ çĕртен?!—çакăн пек шутларĕç пирĕн чăптаç екскурсантсем.

* *
*

Кайсан-кайсан „Абхазия" прахут Сухум хулине çитсе чарăнаť.

Кунта екскурсантсене халиччен курман пысăк пристăн—тинĕс пристăнĕ—порт хытă тĕлĕнтерчĕ. Кунта темиçе прахут, темĕн чухлĕ карапсем. Сухум пысăк портлă хула. Сухум—сатсем хушшинчи илемлĕ, курортлă хула. Унăн курорчĕсемпе ботаникă сачĕ, сачĕсенчи—бамбук, викторийа регийа текен, тата субтропикри

ӳсекен ытти хаклӑ йышши йӑвӑҫсем те пӗтӗм екскурсантсене тӗлӗнтереҫҫӗ. Мӗнле тӗрлӗ йӑвӑҫ-курӑкпа мӗнле упӑте таврашӗ ҫук-ши ку Сухумри сат-пахчисемпе упӑте питомникӗсенче?!

## Упӑтесен питомникӗнче

Ту айӑккинчи лапамрах хӳтӗ вырӑн. Аслӑ сат-пахчи. Сатра темиҫе тӗслӗ йӑвӑҫ-курӑк, тӗрлӗ чечексем ҫеҫкеленеҫҫӗ. Ӑшшӑн вӗрет лӗпӗ ҫил. Сивӗ ҫил ку вырӑнта пулмасӑ̆ те. Сат алӑкӗнчен кӗрсенех ӗречӗ-ӗречӗпе пралукран карса тунӑ клеткӑсем—картасем курӑнса каЙаҫҫӗ. Ҫав клеткӑлӑ тимӗр картасенче тӗрлӗрен тӗслӗ упӑтесем пурӑнаҫҫӗ. Упӑтесем ваљљи ирӗк клеткӑсем ӑшне каштасемпе пӗчӗкҫӗрех чикмексем вырнаҫтарса панӑ. Ҫав каштасем, чикмексем ҫинче упӑтесем ирхи кунран пуҫласа каҫченех лара-тӑра пӗлмесӗр, мӗн ыванса ҫитиччен тӗркӗшеҫҫӗ: йе пӗрне-пӗри хӳринчен вӑрттӑн туртаҫҫӗ-и вӗсем, йе тепӗри хӑй ҫумӗнчи йулташне аллипе ҫапса тарать; вара ӑна виҫҫӗмӗшӗ хуса ҫитсе пусса ӳкерсех кӑшкӑртать; леш ӑна парӑнасшӑн мар, унпа пикӗнсех кӗрешет. Хӑш чухне вӑйлӑраххисем имшеррисене йӗкӗлтеҫҫӗ. Йе тата хӑш-пӗр чӗпписем ашшӗ-амӑшне виртлесе ҫилентереҫҫӗ, ҫиленнӗ амӑшӗ вӗсене ҫавӑнтах вӑрҫса тӑпаласа пӑрахать. Ҫавӑнтах чикмек ҫинче физкуљтурӑ вӑййи тӑвакансем те пур. Вӗсенчен хӑш-пӗрисем циркри акробатсем пек хӑтланаҫҫӗ; теприсем, пӗр-пӗр кӗтессе пӗшкӗнсе ларнӑ та ҫумри пыйтӑ-пӑрҫа таврашне пӗтереҫҫӗ.

Сухумри питомникре 250 упӑтене йахӑн тӗрлӗ ӑрулӑ упӑтесем пурӑнаҫҫӗ. Унта Африкӑран, Австралирен тата ытти шӑрӑх йенчи ҫӗрсенчен кӳнисем те сахал мар.

Питомникре ӗҫлекен профессӑр екскурсантсене пӗр клеткӑ умне чарса тӑратрӗ:

— Ак ку пирӗн „гамадрил“ текен упӑте пулать. Вӑл 26 ҫулта. Йунашар пӳлӗмри—унӑн икӗ ачалӑ арӑмӗ...— тет профессӑр. Гамадрил хӑй пӳлӗмӗнче мӑнкӑмӑллӑнрах, темле чинлӑ ҫын пек, йерипен уткаласа ҫӳрет.

Вăл, йут çынсене питех йуратманскер, тӳнтерле çаврăнса ларать те, екскурсантсем çине çаврăнса та пăхмасть.

— Çак гамадрил „пичче“ çине, нумайах пулмасть, сăнамала 200 пыйтă йарса пăхрăмăр. Вăл 200 пыйтăран часах пěр пыйтă та хăвармарě... Чирлессе тата упăтесем, çын měнле чирпе чирлет—çав чирсемпе пуринпе те чирлеççě. Çынсем хушшинчи сикекен чир упăтесем çине те сикет,—тесе тăнлантарать упăтесене пăхакан.

— Ав, пăхăр-ха гамадрил „арăмě“ çине: йепле вăл ачисене ěмěртет,—хушса хурать çав вăхăтрах питомникре ěçлекен.

Екскурсантсем гамадрил арăмě çине пăхаççě.

— Ха, пăх-халě ăна, ачине çын пекех тытса ларса ěмěртет!—кăшкăрса йачě пěр екскурсант.

— Ан та калăр ěнтě!—тěлěнеççě теприсем. Екскурсантсенчен кашнийех тěрлě ыйтусем пама васкаççě. Питомникре ěçлекен профессăр вěсене йěркипе, васкамасăр кала-кала парса ăнлантарать.

— Нумайăн вěсем кунта,—терě малала профессăр.— Кунта хěлле те сивě пулмасть те, хěлле, пěр 180-měшěнчен пуçне, пурте çак клеткăсенчех иртереççě. Пӳртрисене те 5 градăсран ытла ăшă кирлě мар. Апат-çимěç тěлěшěнчен, аш-какайран пуçне, çын měн çийет—çавсене йăлтах çийеççě... Малашне аш-какай та çийекен пулаççě-ха вěсем. Халиччен çименни—вěсем хăйсем ăрăвě тăрăх шăрăх йенчи тěрлěрен çырлалă-çимěçлě вăрмансенче пурăннинчен килет.

— Ачисене-и?—тет профессăр, кěçех тепěр екскурсант панă ыйтăва тытса илсе.—Ачисене хăй тěллěнех çуратать. Кăвапине те хăйех татать. Çуралсан, 6 уйăхчен, чěчě ěмěртсе усрать, кайран, майěпе хăйěнчен уйăрать вара ачисене. Ачисен çуралсанах куçěсем курма тытăнаççě. Кунта темиçе тěрлě ăрат та пур. Пěр йышши ачисене икě аллипе тытса йăтса çӳрет, чěчě ěмěртнě чухне те ачине сулахай алли çине лартса ěмěртет; тепěр йышшисен ачисем хырăм айěнчен çакăнса çӳреççě; тата çурăмě çинче çӳрекеннисем те пур. Гамадрил çурисем амăшěн çурăмě çинче ларса çӳреççě. Иртнě çул-

та 17 ама çăвăрларĕç. Пурин те ачисем сывлăхлă ӳсеççĕ-ха... Кулътуралăх тĕлĕшĕнчен тасарах пурăнма тăрăшаççĕ вара,—тет питомнике пăхакан зоолог-професcăр кăшт йăлкăшса йарса.

Профессăр тата нумай ăнлантарчĕ. Екскурсантсенчен хăш-пĕрисем, халиччен упăтесене картинкă çинче çеç курнăскерсем, пĕтĕмпех тĕлĕнсе кайрĕç.

* * *

Упăтесен питомникĕпе паллашнă хыççăн, екскурсантсем ĕлĕк „Çĕнĕ Афон" тенĕ монастыр пулнă вырăна кайса кураççĕ. Ку монастырте 800 монах таран пурăннă. Çав монахсем, пуринчен ытла вĕсен пуçлăхĕсем, çав вырăнта нумай çул хушши ашкăнса, халăхран вăрттăн ирсĕр ĕçсем туса пурăннă. Монахсемпе вĕсен ирсĕр ĕçĕсем çинчен каласа пани екскурсантсене хытă тĕлĕнтерет, ĕлĕкхи тĕн ултавне тепĕр хут аса илтерет.

* * *

Екскурсантсем Сухумра, нумайччен асăнмалăх тĕлĕнмели вырăнсене курса çӳресе савăнаççĕ.

Унтан—Туапçе, Новороççийск, Краснодар хулисене çитсе кураççĕ. Краснодарта, ытарайми çĕршывпа тепĕре куриччен сывпуллашса, Кавказран уйăрлаççĕ. Вĕсене Кавказ нийепле те йарасшăн мар: хăнасем вырăнне хурса, татах пăхасшăн, татах нумай кăтартасшăн хăй çĕршывĕн илемлĕхĕпе тĕрлĕрен пуйанлăхне. Анчах уйăрлмалах килет савнă Кавказпа.

Краснодарта ларнă пуйăс пирĕн чăптаç екскурсантсене Сталинград йеннеле илсе вĕçтерет.

## Сталинградра

Екскурсантсен пуйăсĕ аслă Атăл хĕрринчи Сталинград патне çитсе перĕнет. Унта хула çывăхĕнче темиçе километр талкăшĕ сарăлса ларакан гигант-савăтсен гудокĕсем хыттăн йантратса пĕтĕм хула таврашĕнчи сывлăша чĕтретеççĕ.

Сталинград пысăк промышлĕннăçлă хула. Унта пĕтĕм

тĕнчипе паллă трактăр савăчĕ, темиçе металлурги савăчĕсем тата ытти те. Пурте ĕçлесе кĕрлесе лараççĕ. Ик-виçĕ йенчен пырса кĕрекен чукун çулĕсем, Сталинградран тĕрлĕ тавар продукцисене çĕршыв тăрăх тĕрлĕ йеннеле салатаççĕ.

Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче çак таврара хайар çапăçусем пулнă. Унта Красновпа Деникинăн тата ыттисен шурă бандисем те сахал мар ашкăннă. Вĕсем йалĕ-йалĕпе вут хыптарса вĕсене кĕл туса вĕçтернĕ.

„Скотину—отбирать! Самих—расстреливать! Остальное—сжечь!"—текен приказсем панă вĕсем. Кам большевисăмшăн тăнă, кам Совет влаçĕшĕн пулнă—çавсенне шурă генералсен йыттисем чĕрĕлех куçĕсене кăларса илнĕ, чĕрĕлех тирне сӳнĕ, чĕрĕлех вутта пăрахса çунтарнă. Çак вырăнти пурнăç сăра хуранĕнчи шыв пек вĕренĕ çав вăхăтра.

Çак урнă бандăсен хура вăйне, аслă революци çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, Хĕрлĕ çар—тĕппрен çапса салатаť. Çавăнтанпа вара çакăнти ĕлĕк „Царицын" тенĕ хула—„Сталин" йатне илсе—Сталинград пулса тăраť.

Екскурсантсем Сталинградра чи малтан 60.000 çын пурăнакан трактăр савăтĕнчи рабочисен поççолкине пырса кураççĕ. Кунта вĕсене каллех Мускавпа ытти пысăк хуласенче курнă шавлă пурăнăç аса килет. Хулара—темиçе хутлă çуртсем, пысăк сатсем, киносем, театăрсем тата ытти те. Екскурс-базăри çынсем кунта та ытти хулари пекех тараватлă. Вĕсем екскурсантсене пур пысăк гигант-цехсенчен тытăнса пĕчĕк предприйатисене, йе чăн пысăк театăрсенчен пуçласа клубри пĕчĕк çпектакльсене çитичченех кăтартса çӳреме хатĕр. Кăтартаççĕ, кăмăллăн кала-кала ăнлантараççĕ.

... Акă, трактăр савăчĕ. Унăн корпусĕсем таçта çитех талкишпе сарăлса лараççĕ. Темиçе пин машинă, темиçе çĕр цех вăл корпуссен; темиçе цехран пĕчĕк винтăсем таранччен пĕр çĕре пухăнса вĕççĕр конвейĕр тăрăх тĕп цехран трактăр пула-пула тухаť.—Техникă! темиçе хут ăстайлăн, меллĕн майласа лартнă, хăватлă çĕнĕ техникă.

60 000 рабочи пĕр гигант-савăтра. Унта темиçе чĕл-

хелĕ халăх пĕр тăван йыш пек килĕштерсе ĕçлесе тăрать. Чăваш чăптаç екскурсантсем килнĕ тенине илтсен, пĕр ачаран чăваш хушшинче кĕтӳ кĕтсе ӳснĕ тутар ачи вĕсемпе курнаçма васкарĕ.

— Ой, иптешлер, чăвашсем пулатăр-и? Пире килсе курас терĕр апла? Йурать, йурать!—тет те вăл, паллана çывăх йулташ пекех пулса дирекцирен екскурсантсене кăтартса çӳреме пропуск илет, унтан вĕсене хăйпе пĕрле илсе çӳрет.

— Малтан паллашар-ха: мана Арифула тесе чĕнеççĕ. Епĕ кунта савăтне тума пуçланăранпах ĕçлетĕп... терĕ вăл.—Авă пăхăр, йулташсем, таврана. Çак савăт-гиганта пĕтĕмĕшпех 11 уйăхра туса пĕтернĕ. Ĕлĕк пулсан, пупсен чиркĕвне, йе мулласен мечетнĕ те ик-виçĕ çул тунă. Паллах, ĕлĕк урăх çынсем пулнă, халĕ урăх çынсем. Хĕн-хур айĕнче çăмăл пулман вĕт ĕçлеме, — тет Арифула, йĕри-тавралах карăнса ларакан савăт корпусĕсем çинеле кăтартса илсе.

— Чи пирвайхи трактăра туса кăларсан,—калать вăл малала,—1930-мĕш çулта савăннипе ним тума пĕлмен епĕр, пĕтĕм рабочисем пĕр сасăпа урра кăшкăртăмăр...

— Вăл çул 1000 трактăр тунă, тепĕр çулне—18 452, виççĕмĕш çулне—40 000, тăваттăмĕш çулта—210 159...

— Савăта тума тытăнсанах йут патшалăхсенчи бурджуази хаçат-журналĕсем намăса пĕлмесĕр кулчĕç пирĕнтен. Тăваймаççĕ-имĕш! Чăнах та ун чухне, Германирен йе Америкран кӳнĕ машинăсен йахăнне пыма та хăраттăм епĕ. Пĕлмен ал-урапа мĕн тăвăн есĕ? Анчах, вĕренсех çитрĕмĕр те, çирĕппĕн алла илтĕмĕр техникăна. Çавăнпах большевиксем те ĕнтĕ епĕр... Малтан хам епĕ, ултă çул ĕлĕк, кирпĕчĕ йатма кĕтĕм çакăнта. Кайарахпа бетоншчĕке куçрăм, унтан арматура ĕçне. Кайрĕ вара ĕçĕм! Ак, халĕ аслă механик теççĕ ĕнтĕ. Ĕçленĕ вăхăтрах вĕренсе пынă епĕр. Çапла ĕнтĕ, Совет влаçĕ çын турĕ пире... Ав, пăхăр-ха, йепле вăйлă ăйăрсем хатĕр сухана. Колхоз уйĕсене саланаççĕ вĕт вĕсем... Тĕнчене тепĕр йенне çаварса хурĕç,—тет Арифула савăнăçлăн йăлкăшса.

Екскурсантсен умĕнче урам пек икĕ ĕретĕн, леререх

тата темиçе ĕрет симĕсĕн-кăвакăн курăнса, халĕ çеç конвейĕр çинчен тухнă вĕр-çĕнĕ трактăрсем лараççĕ. Вĕсем Совет çĕрĕн аслă уй-хирĕсене тухса кайма хатĕр.

— Миçе трактăр кăларнă-ши талăкне çакă савăт?— ыйтрĕ пĕри ертелрен.

— Халӡхи вăхăтра кунсерен вăтам шутпа 144 трактăр, 154-шар мотор туса кăлараҫ,—тесе пĕлтерет Арифула.

Хытă тĕлĕнтерчĕ чăптаç екскурсантсене трактăр савăчĕ. Вĕсенчен чи ватăраххи, Микулай пичче, кайрĕ тарăн шухăша:—Етем, етем... Мĕскер çеç тумасҫ-ши вăл тĕнчере? Мĕскер шутласа кăлармасҫ-ши? Вăл, лампă тавра вĕçекен лĕпĕшсем пек, вĕçе пуçларĕ çĕр йĕри-тавра; пĕлĕт тӳпине тыткăна илчĕ хăй аллине; темиçе пин çухрăмран йунашар ларнă пек пĕр-пĕринпе калаçаҫ; çĕр айĕнче те, шыв тĕпĕнче те, сывлăшра та—етем. Вăл халиччен никам пуç чикмен сĕм вăрмансем хушшине йе çеçен хирсем варрине ик-виçĕ çулта халлапри пек хуласем тăва-тăва лартаҫ; чуллă сăрт-тусене ишет; ĕмĕртен усăсăр йухса выртнă пысăк шывсене пĕвелесе хăйшĕн ĕçлеттерет. Çапла, çак тĕнчери чи хăватлă вăйсен вăйĕ—етем шутланаҫ иккен.

... Тăван ĕçхалăхĕ, йепле ытарайми чĕртет вăл тăван çĕршыва! Тăваҫ вăл çĕнĕ пурнăç, тулăхлă, ирĕклĕ çутă пурнăç. Мĕскер, вăл тăваҫ, мĕскер ĕçлет—унăн ĕçĕ ĕлĕкхи пек харама каймасҫ, пĕтĕмĕшпех хăйне ваӡӡи— хамăр ваӡӡи, хамăрăн пулас ăрусем ваӡӡи ĕмĕр ĕмĕрлĕхе!—Çакăн пек шухăшсем çиçĕм пек çиççе иртрĕç Микулай пичче пуçĕнче. Тарăн шухăша кайнипе ăна Арифуллан йулашки сăмахĕ, вăл Сталинградри трактăр савăчĕн 5 çуллăх йубилейĕ пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтермеле чаплă пулса иртни çинчен калани, ыррăн пуçне кĕмесĕрех йулчĕ. Çав йубилей вăхăтĕнче пĕтĕм Сталинград хĕвел пек йалкăшнă, пĕтĕм ĕçхалăхĕ савăннă, чаплă уйав уйавланă.

* *
*

Трактăр савăтĕнче темĕн те пĕр курса хĕпĕртенĕ хыççăн, екскурсантсем тăван уй-хире, тăван йалсене,

тăван производствăна аса илнипе—Атăл çине, тăван Атăлпа савăнма пристăне васкарĕç.

Сталинград пристăнĕ Сухум пристăнĕнчен кăштах кайарах. Çак пристăнђрен Атăл тăршшĕнчи уй-хирсене хурçă утсем пысăк прахутсемпе ăсанаççĕ. Вĕсене ĕç кĕтет, ĕç, социалисăмла уй-хирти мухтавлă ĕç.

## Атăл çинче

Сталинград пристăнĕнче пирĕн екскурсантсем „Карл Маркс" йатлă пысăк прахут çине лараççĕ.

„Карл Маркс" пристăнђрен, çиллес вăкăр пек мăнкăмăллăн мĕкĕрсе, васкамасăр хускалчĕ. Вăл, пысăк вăйĕпе мухтаннă пек, Атăла çурмаран касса, Саратăв йеннеле хăлаçланат̆. Екскурсантсене трактăр хулинчен часрах комбайн хулине çитересшĕн хытăран хытă кайма тытăнат̆.

Ирĕкçке, уçă та канлĕ Атăл тăрăх Аçтăрхан прахучĕ çинче ларса пыма. Çакăн пек пулнă-и ĕлĕк?

Ĕлĕкхи вăхăтра пирĕн чăптаçăсем пек çынсене Атăл тăрăх савăнса çӳреме те кун пулман. Пирĕн пулман вăл авалхи Атăл.

Кивĕ Атăл—хĕн-хурлă Атăл. Кам çеç куççулĕ тăкман-ши, миçе бурлак сĕвĕнсе ӳкмен-ши кивĕ Атăл хĕрринче? Миçе купца сарман-ши хăйĕн хырăмне, мĕн чухлĕ тултарман-ши вĕсем хăйсен кĕсйисене кивĕ Атăл çинче тертленнĕ халăх тарĕпе?

Кивĕ Атăл—куççуллĕ Атăл. Аçтăрхантан Рыбинска çитийех пĕр салху кĕвĕлĕ йурă хуллен те хурлăхлăн тăсăлнă ун çинче. Вăл куççуллĕ, йунлă, хĕн-хурлăх йурри! Аçтăрхантан Рыбинска çитийех çуртсăр -йĕрсĕр, çĕтĕкĕн-çурăкăн тертленсе çӳренĕ унта вуншар пин çынсем, вĕсем пусмăрти ĕçхалăх ывăлĕ-хĕрĕсем пулнă.

Кивĕ Атăл—йунлă Атăл. Вăхăтпа вăл хӳтĕленĕ паттăр Çтенкăна, хăват панă Пăкачав Йемелне те... Мĕнле паттăрсем, мĕнле матурсем пулман-ши ун çинче нумай ĕмĕрте? Çав паттăрсен хурлăхлă та çиллĕ йуррисем аслă Атăл тăршшĕнчи уй-хирсемпе çӳлĕ тусене, хура вăрмансене çĕнтерӳлĕн йанăраттарнă. Çав йурăсем илтĕннĕ инçете.

* *
*

Çĕнĕ Атăл— чаплă Атăл!

Кам çеç савăнмасť-ши сан çинче, кам çеç хаваслă йурă йурламасť-ши анлă кăкăрлă çутă хумусем çинче пайан кун? Кама савăнтармаççĕ-ши сан ирĕклĕ прахутсем, миçе çын чĕрине çĕклентермеççĕ-ши вĕсем пайан кун?

Çĕнĕ Атăл—хаваслă Атăл, савăнăçлă Атăл! Сан хулусемпе аслă уй-хирсем тăрăх миçе мĕлйун рабочипе колхозник савăнмасť-ши, кам ыpă курмасť-ши пайан кун? Пайанхи кун, есĕ йухса тухакан Çелигер кÿллинчен пуçласа Каçпи тинĕсне çитичченех пĕр йурă, çĕнĕ йурă тăсăлаť, вăл телейлĕ пурнăç йурри.

Çĕнĕ Атăл, ытарма çук Атăл,—ирĕклĕ ĕçхалăхĕн Совет Атăлĕ...

„Карл Маркс“ шыва хирĕç паттăррăн ыткăнаť. Анчах шуни пĕртте паллă мар унăн. Çултаlăкĕпех чăпта çапса йе уй-хир ĕçĕсене ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн пит те ансат иккен аслă Атăл тăрăх уçăлса çÿреме, аван-мĕн пысăк прахутăн класлă пÿлĕмĕсенче ларса пыма. Иккĕмĕш класри сарлака çулçăлă фигуссем айĕнче радио итлесе пынă чух çав тери ырă та канлĕ. Мускав концерчĕ тарăн шухăша йараť çамрăка. Шурăмпуç килнĕ чух шур пĕркенчĕклĕ çĕмĕрт çинчи ачаш шăпчăкла йурлакан актриссă сасси чĕрене тивсе вырнаçаť.

Аслă Атăла сисĕнми каранса килнĕ тĕттĕм каç чаршавĕ витсе лартаť. Прахут шунă май тĕттĕм çыран хĕррисенчен симĕсĕн-кăвакăн çĕнĕрен çĕнĕ курăнса пыракан майак хунарĕсем куçа ачашлаççĕ. Вĕсем хăйсем патне кăчăк туртнă пек туйăнаççĕ.

Пит те аван тĕттĕм çĕрте çав вĕлтĕрти вут çуттисене палубă çинчен пăхса пыма. Лăпкăн вĕрекен ăшă çилĕ тулли пит-куçа йăвашшăн сĕртĕнсе ачашлаť. Кăмăла уçса çĕклентерет вăл, хаваслантараť лăпкă тÿлек каç. Çывăрас та килмест. Анчах та çавах, кунпа çĕрĕн саккунĕсене пăхăнса, çĕрле выртса канмалах.

— Ыран Саратăв хулине çитетпĕр. Унта комбайн савăчĕ пур теççĕ. Сталинградра трактăр савăтне курса

тӗлӗнтӗмӗр. Саратăвра комбайн савăтне курасчӗ тата. Вара çитет... Ну, кӗрсе выртар пуљ. Ирччен çывăрас, канас,—тет Микулай пичче, палубă çинче хăйпе калаçса ларакан Йаргейӗв Ваçилине.

— Вăхăт чылай кӗçӗр. Выртсан та йурат. Ыран каллех Саратăвра çӳреме вăй пухар,—тесе хурат ăна Йаргейӗв.

Тӗттӗм çӗрле палубă çинче шакăлтатса калаçса ларакан чăптаçă екскурсантсенчен пуринчен малтан ватăраххисем, Таниле Микулипе Йаргейӗв, кайутăсене кӗрсе кайаççӗ.

Тӗттӗм пулин те, вăхăт чылай пулин те Праски, Саңка, Лаврентитата ытти çамрăксем те палубă çинче татах чылай ларса йурату халлапӗсене çаптараççӗ.

* * *

Саратăв, Куйбышӗв, Уљйанăвск, Хусан хулисем хыçа тăрса йулнă. Прахут малтанхи пекех хăватлăн ишсе Чăваш республикин çӗрне çитсе кӗрет. Кӗçех Шупашкара çитмеле.

Акă Атăлăн сылтăм йенче, сăртлă çыран çинче, чăваш чӗлхине, чăваш йурри-кӗввисене пӗтӗм тӗнчене сывлăш урлă саракан çӳлӗ радиомачтăсем курăнса кайаççӗ. Çаксене курсан, палубă çинчи екскурсантсем тата тепӗр хут хӗпӗртерӗç. Айакран курăнакан Атăл хӗрринчи пысăк çуртсем каллех пӗтӗм курса иртнӗ хуласене аса илтереççӗ.

Хыçра: трактăр хули—Сталинград, комбайнлă—Саратăв, цемӗнтлă—Вољск, Атăлăн Самар кукăрӗ, чуллă Жигули сăрчӗсем; чăнкă çыран хӗрринче вăлтапа пулă тытса ларакан стариксем; кимӗ çинче виççӗн-тăваттăн ларса купăс кӗвви тăрăх йурра шăратакан çамрăксем; чаплă хула—Куйбышӗв; Ленин çуралнă—Уљйанăвск (Чӗмпӗр); Хусан — Тутар республикин чӗри — историлӗ хула. Хыçра пурӗ 28 пысăк хула! Хыçала, инçете тăрса йулнă ӗмӗр манми йем-йешӗл Кавказ та. Вӗсенче кашниййӗнчех пулнă, кашниййӗнчех тем те пӗр курнă. Вӗсенче пуринчен те чӗрӗ пурăнăç, ӳсекен, сарăлакан çутă пурăнăç, пысăк строителства. Пур çӗрте те пӗр

хаваслăх, пĕр йурă, пĕр йурату, пĕр савăнăç. Аслă çĕршыв. Чечеклĕ çĕршыв. Тĕреклĕ те хăватлă, телейлĕ çĕршыв!

„Карл Маркс“ Шупашкар пристăнне çитсе чарăнат. Йем-йешĕл çыран, йем-йешĕл бульвар—çуралнă çĕршыв. Чапайĕв çуралнă çĕршыв, тăван Шупашкар.

Микулай пичче тарăнăн сывласа илчĕ.

— Савăнăр, ачасем, савăнăр... аван çаврăнса çитрĕмĕр. Çапла тĕнче кăтартса çÿресе тăн-пуçа уçма май панăшăн, халĕ ĕнтĕ пирĕн партипе Совет влаçне тата хамăрăн Чăвашкульпромсойуза чĕререн тавтумали çеç йулчĕ,—терĕ вăл прахут çинчен тухма алăк умне пухăнса тăнă йулташĕсем çине пăхса.

— Тавтумала, тата хамăр производствăна халччен-хинчен ик-виçĕ хут ытла ÿстермеле,—хушса хурат унпа йунашар тăракан Лаврентий.

— Çаплах ĕнтĕ, тĕрĕс ку,—сăмах хушрĕç Праскипе Санька та, çав вăхăтрах пристăнь çинеле тухакан халăх ушкăнне пĕрлешнĕ хĕрсем.

* * *

Екскурсантсем Шупашкара çитсен, вĕсене чысласа калаçу туса иртгермех Чăвашкульпромсойуз правленийĕ савăнăçлă лару тăват.

Ку савăнăçлă ларура чăптаç екскурсантсем Кульпромсойузра ĕçлекенсене хăйсем мĕн-мĕн курни çинчен, екскурççи Совет çĕршывĕн строителствипе паллашма пулăшни çинчен кала-кала параççĕ. Вĕсем хăйсене екскурççине йанăшăн тавтăваççĕ, çакăнпа пĕрлех тата чăпта çапас ĕçе татах вăйлăлатса ĕçе лайăхрах та пахарах туса пыма сăмах параççĕ. Пуринчен малтан Амурцĕв Лаврентий калат:

— Мана правлени екскурсантсен ушкăнне лайăх пăхса çÿресе, вĕсене сывă та чипер халлĕн илсе таврăнма хушса йачĕ. Хам çине хунă задачăна епĕ лайăх пурнăçа кĕртрĕм тесе шутлатăп,—тет Лаврентий, хăйĕн кĕске отчот пек сăмахне вĕçлесе.

Амурцĕв хыççăн Кириле Петĕрĕ сăмах илет. Петĕр Çĕрпÿ районĕнчи чăпта ĕçĕн ударникĕ—изобретател.

вăл тăлăххăн, никам пăхакансăр нушаланса ӳснĕ çамрăк çын.

— ...Епĕ шухăшласа кăларнă станук чăпта çапас ĕçе нумай çăмăллатрĕ теççĕ. Уншăн епĕ хам та çав тери хĕпĕртетĕп.

...Çак екскурççи хыççăн, епĕ малашне хамăн ăс-халăма пĕтĕмпех чăпта ĕçне татах та ытларах лайăхла тассишĕн хума сăмах паратăп,—тет вăл хăйĕн сăма хĕнче.

Унтан Праски Федорăвнă тăрат:

— Хăраса, иккĕленсе тăтăм епĕ малтанах ку инçетри çула тухса кайиччен. Анчах та кайни питĕ усăлă пулчĕ. Анланма та пултарайман епĕ халиччен Совет Сойузĕн аслă çĕршывĕпе унăн чаплă хулисем çинчен. Халĕ ĕнтĕ нумай хуласене, тĕрлĕрен çĕрсене хамăр куççемпех çитсе курса килтĕмĕр. Нумай пĕлтерчĕ, нумай тăнпуçа уçрĕ ку екскурççи. Мĕн курни-илтнисене епĕ ĕмĕрне те манас çук... Пире ку екскурççийе хамăр ĕççене ударлăн туса пынăшăн йатăр пулсан, епĕ хам йенчен чăпта çапас ĕçе малала ĕнтĕ тата ик-виçĕ хут ытла ӳстерсе, тĕртекен чăптасен пахалăхне те татах лайăхлатма тăрăшăп. Ĕлĕкхи вăхăтра чăпта ĕçĕнче кулаксем тӳлекен укçа тĕпренчĕкĕшĕн çеç çĕрĕн-кунĕн, хĕлĕн-çăвĕн хура пӳртрен тухмасăр пăчăхса ĕçлесе ларнипе те выçăлă-тутăлăн çеç пурăнаттăмăр пулсан, халĕ ĕнтĕ укçине аван тӳлеççĕ, лайăх ĕçлесен премисем параççĕ, çитменнине тата Совет çĕрĕ тăрăх çӳреттерсе çут тĕнчепе паллаштараççĕ. Пĕркуннех каларăм епĕ: ĕлĕк пулсан, хамăр Трак районĕнчен çакăнти Шупашкара та килсе курайас çук. Халĕ акă тĕнче хĕррине—Кавказа кайса килтĕмĕр... Тав Совет влаçне! Тав партийе! Тав Чăптапромсойузне, пирĕн ĕçе хак хунăшăн!.. —тесе хучĕ Праски, савăнăçлă пит-куçĕпе çутă хĕвелпек йăлкăшса илсе.

Праски хыççăн ыттисем те каласа пачĕç. Анчах та вĕсен сăмахĕсем пурин те пĕр майлăрахах пулса пычĕç. Праски майлах каларĕ ватă Микулай пичче те, çавăн пекех каларĕ Йарки Ваçили те, çаплах каласа пачĕç Саҫка, Çтенке Елекçейĕ тата ыттисем те. Пурте вĕсем

екскурççи хăйсене пысăк усă панине, ертелре ĕçлекен чăптаçăсен ĕçĕ ĕлĕкхинчен темиçе хут çăмăлланнине каласа, малашне тата ытларах пикенсе ĕçлеме сăмах пачĕç.

Савăнăçлă пуху савăнăçпах саланать.

Лару пĕтнĕ хыççăн, Чăвашкуљпромсойуз хăйĕн паха ударникĕсене çăмăл машинсем çине лартса, пурне те харпăр хăй килĕсене çитех ăсатать.

---

Редактор С. Эльгер. Тех. редактор Н. Степанов.

Поступ. в пр-во 3/II-36 г. Подп. к печати 22/III-36 г.
Уп. Чувашлита № 1323. Заказ № 0207. Чувашгиз № 36.
Ст. ф. 72×105 1/32. Об'ем 1,25 печ. лист. Тир. 5000 экз.

Тип. № 1 Чувашгиза, Чебоксары, Канашская 16.

Цена 75 коп.



Владивас Бараев

# КАВКАЗСКИЕ ГОСТИ

Чебоксары 1936